# Малтанхи юратăвăм

***Юрий Кудаков кĕвви***

Малтанхи юратăвăм,
Чĕрери ыратăвăм,
Çутăлсаттăн шуçăм пек пурнăç
умĕнче.
Чечексен ачашлăхĕ,
Яш кун-çул малашлăхĕ
Илĕртсе тăратчĕç-çке тусăм
çумĕнче.

Малтанхи юратăвăм,
Чĕрери ыратăвăм,
Ма пурăнаймарăн-ши çамрăк
чунăмра?
Çуркунне хаваслăхĕ,
Кăвак куç кăваклăхĕ
Мĕншĕн çунса кайрĕ-ши тĕттĕм
çулăмра?

Малтанхи юратăвăм,
Чĕрери ыратăвăм,
Çаврăнса килеймĕç тек ытарми
кунсем.
Малтанхи юратăвăм,
Ытарми çухатăвăм,
Аякри çут çăлтăр пек ялкăшан
хĕлхем.

*Сементер, Ю. «Малтанхи юратăвăм» : [юрă] / кĕвви Ю. Кудаковăн ; сăвви Ю. Сементерĕн // Тантăш. – 1999. – 15 ака (№ 16). – С. 6.*